Иванов К.В. Çӳл ту; Хурăн çулçи; Хура ĕне; Тĕвик-тĕвик тĕкерлĕк : К.В. Иванов çырса илнĕ халăх юррисем // Çамрăк большевик. – 1940. – 19 юпа.

## ÇӲЛ ТУ

Çӳл ту çинче хурăнлăх,
Çинчен милĕк суйлар-и те,
Тĕпне хăйлăх тăвар-и?

Вăрман хĕрри юманлăх,
Çинчен икел суйлар-и те,
Тĕпне юпа тăвар-и?

Вĕт вăрманта шĕшкĕлĕх,
Çинчен мăйăр суйлар-и те,
Тĕпне тенкел тăвар-и?

Ту питĕнче чиелĕх,
Çинчен чие суйлар-и те,
Тĕпне çатан авар-и?

Парлак çинче çырлалăх,
Çинчен çырла суйлар-и те,
Тĕпне утă тăвар-и?

## ХУРĂН ÇУЛÇИ

Хурăн çулçи çурсассăн,
Килет вăрман илемĕ.
Хурăн çулçи тăкăнсан,
Каять вăрман илемĕ.

Хĕвел хĕрелсе тухсассăн,
Килет вăрман илемĕ.
Хĕвел анса ларсассăн,
Каять вăрман илемĕ.

Çырла çеçке çурсассăн,
Килет парлак илемĕ.
Çырла çеçке тăксассăн,
Каять парлак илемĕ.

Хурлăхан çеçке çурсассăн,
Килет çыран илемĕ.
Хурлăхан çеçке тăксассăн,
Каять çыран илемĕ.

Мăкăнь çеçке çурсассăн,
Килет пахча илемĕ.
Мăкăнь çеçке тăксассăн,
Каять пахча илемĕ.

Хирти курăк ешерсен,
Килет хирĕн илемĕ.
Хирти курăк типсессĕн,
Каять хирĕн илемĕ.

Хĕрсем урама тухсассăн,
Килет урам илемĕ.
Хĕрсем урамран кайсассăн,
Каять урам илемĕ.

Хĕвел хĕрелсе тухнă чух,
Килет тĕнчен илемĕ.
Хĕвел анса ларсассăн,
Каять тĕнчен илемĕ.

Хĕрсем вăйя тухсассăн,
Килет урам илемĕ.
Хĕрсем вăйăран кĕрсессĕн,
Каять урам илемĕ.

## ХУРА ĔНЕ

Хура ĕне пăлан пек,
Хӳри вĕçĕ çĕлен пек.
Пирĕн тантăш пике пек,
Икĕ пичĕ чие пек*).

*) Ун вырăнне «Икĕ куçĕ çăлтăр пек» тесе юрлаççĕ тата.

Вăрăм сăрка пырĕ эпир,
Çавăнпа çинçе пулнă эпир.
Çарви çинчи кĕпçе эпир,
Çавăнпа яка пулнă эпир.

Çулçă айĕнчи çырла эпир,
Çавăнпа шурă пулнă эпир.
Аттен-аннен пĕр хĕрĕ,
Çавăнпа шухă пулнă эпир.

Сарă-сарă сарана,
Сарана нумай çинĕ эпир.
Сарă-сарă ан тийĕр,
Çавăнпа сарă пулнă эпир.

Парлак çинче çырлалăх,
Çырла нумай çинĕ эпир.
Шатра тесе ан калăр,
Çавăнпа шатра пулнă эпир,

Çӳл ту çинче чиелĕх,
Чие нумай çинĕ эпир.
Хĕрлĕ-хĕрлĕ ан тийĕр,
Çавăнпа хĕрлĕ пулнă эпир.

## ТĔВИК-ТĔВИК ТЕКЕРЛĔК

— Тĕвик-тĕвик текерлĕк, текерлĕк,
Ăçта каян, текерлĕк, текерлĕк?
— Çуртăм патне каятăп, каятăп.
— Санăн çурту ăçтарах, ăçтарах?
— Тула пуççи айĕнче, айĕнче.
— Çурту çине мĕн витнĕ, мĕн витнĕ?
— Хăмăш касса хуп витнĕ, хуп витнĕ.
Пусса улăхма пусми çук, пусми çук,
Тытса улхма тытки çук, тытки çук.